ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ АДМИНИСТРАТИВЛĂ ПРАВĂНА ПĂСНИСЕМ ÇИНЧЕН" САККУНЕН 24[1] ТАТА 33 СТАТЙИСЕНЕ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТЕРРИТОРИЙЕНЧЕ ШЁВЕТНЕ УГЛЕВОДОРОД ГАЗЕ ПУР ТАВАРСЕНЕ ÇУЛ ÇИТМЕН ÇАМРĂКСЕНЕ ВАККĂН СУТМА ЧАРАССИНЕ ТАТА ШЁВЕТНЕ УГЛЕВОДОРОД ГАЗНЕ СЫВЛАСА ĂША ИЛМЕЛЛИ МАЙПА УСĂ КУРМА ÇУЛ ÇИТМЕН ÇАМРĂКСЕНЕ ЯВĂÇТАРНИНЕ ЧАРАС ЁÇЕ ÇИРЁПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2025 çулхи нарăс уйăхĕн 13-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче административлă правăна пăснисем çинчен" 2003 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 22 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2003, 55 №; 2005, 62, 64, 65 №-сем; 2006, 69, 72 №-сем; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 75, 77, 78 №-сем; 2009, 81, 82 №-сем; 2010, 84, 86 №-сем; 2011, 88–91 №-сем; 2012, 92 (I том), 94, 96 №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7, 12 №-сем; 2014, 3, 6, 9, 11, 12 №-сем; 2015, 6, 10 №-сем; 2016, 3, 4, 10, 11 №-сем; 2017,

2–4, 7, 11 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2018, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 4-мĕшĕ, пуш уйăхĕн 25-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 3-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, утă уйăхĕн 1-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2023, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000761 №; "Республика" хаçат, 2023, ака уйăхĕн 26-мĕшĕ, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2024, ака уйăхĕн 10-мĕшĕ, çу уйăхĕн 3-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 24^1 статьяра:

а) 5-мĕш пай хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

ă) 6-мĕш пайăн пĕрремĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"6. Çул çитмен çамрăксене вĕсене валли йăлара кирлĕ газ пур сиенлĕ пулма пултаракан таварсем туянса (çав шутра дистанци мелĕпе) е тата вĕсене çавнашкал таварсем парса шĕветнĕ углеводород газне тата (е) унăн пăсĕсене сывласа ăша илмелли майпа усă курма явăçтарнăшăн, шĕветнĕ углеводород газне тата (е) унăн пăсĕсене сывласа ăша илмелли майпа усă курма сĕннĕшĕн е хистенĕшĕн –";

2) 33 статьян 2-мĕш пайĕн "к" пуктĕнче "4–6" цифрăсене "4, 6" цифрăсемпе улăштарас.

2 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин территорийĕнче шĕветнĕ углеводород газĕ пур таварсене çул çитмен çамрăксене ваккăн сутма чарассине тата шĕветнĕ углеводород газне сывласа ăша илмелли майпа усă курма çул çитмен çамрăксене явăçтарнине чарас ĕçе çирĕплетесси çинчен" 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 51 №-лĕ саккунне ("Республика" хаçат, 2021, утă уйăхĕн 1-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) ятне çакăн пек çырса хурас:

"ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТЕРРИТОРИЙĔНЧЕ ШĔВЕТНĔ УГЛЕВОДОРОД ГАЗНЕ ТАТА (Е) УНĂН

ПĂСӖСЕНЕ СЫВЛАСА ĂША ИЛМЕЛЛИ МАЙПА УСĂ КУРМА ÇУЛ ÇИТМЕН ÇАМРĂКСЕНЕ ЯВĂÇТАРНИНЕ ЧАРАС ӖÇЕ ÇИРӖПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН";

2) 1–3 статьясене çакăн пек çырса хурас:

"1 статья. **Çак Саккун йӗркелекен ыйтусем**

Çак Саккун çул çитмен çамрăксен сывлăхне, вӗсен ӳт-пӳ, ăс-хакăл, ăс-тăн, шухăш-кăмăл тата этеплӗх аталанăвне сиен кӳресрен асăрхаттарас тӗллевпе шӗветнӗ углеводород газне тата (е) унăн пăсӗсене сывласа ăша илмелли майпа усă курма çул çитмен çамрăксене явăçтарас ӗçре чару палăртать.

2 статья. **Çак Саккунра усă куракан ăнлавсем**

Çак Саккунра Федерацин "Раççей Федерацийӗнче ача прависен тӗп гарантийӗсем çинчен" 1998 çулхи утă уйăхӗн 24-мӗшӗнчи 124-ФЗ №-лӗ саккуннӗпе палăртнă пӗлтерӗшлӗ тӗп ăнлавсемпе усă кураççӗ.

3 статья. **Шӗветнӗ углеводород газне тата (е) унăн пăсӗсене сывласа ăша илмелли майпа усă курма çул çитмен çамрăксене явăçтарма чарасси**

Чăваш Республикин территорийӗнче çул çитмен çамрăксене вӗсене валли йăлара кирлӗ газ пур сиенлӗ пулма пултаракан таварсем туянса (çав шутра дистанци мелӗпе) е тата вӗсене çавнашкал таварсем парса шӗветнӗ углеводород газне тата (е) унăн пăсӗсене сывласа ăша илмелли майпа усă курма явăçтарма, шӗветнӗ углеводород газне тата (е) унăн пăсӗсене сывласа ăша илмелли майпа усă курма сӗнме е хистеме юрамасть.".

3 статья

Çак Саккун 2025 çулхи пуш уйăхӗн 1-мӗшӗнчен пуçласа вăя кӗрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхӗ – О. Николаев

Шупашкар хули
2025 çулхи нарăс уйăхӗн 17-мӗшӗ
4 №